ЛЕОНИД АГАКОВ

К А23

# Медаль



16
6·05

ЧĂВАШГОСИЗДАТ—1945

Гос.

ПРОВЕРЕНО
2007

9/ж 28202- чув.

Республиканская
[illegible]ка
им. [illegible]ького
Ч[illegible]ской АССР

Чув.
1-2892

# МЕДАЛЬ.

...Нимӗҫсем кунтан чакса каясси халь пуриншӗн те паллӑ пулчӗ. Кашни каҫах хӗвеланаҫнелле тӑшманӑн обозӗсем, орудийӗсем, машинисем шурӗҫ, уйрӑм-уйрӑм батальонӗсемпе ротисем иртсе кайрӗҫ. Яла таҫтан пырса кӗнӗ хыпар тӑрӑх, хӗвелтухӑҫ енчен хӗссе килекен совет полкӗсем кунтан пӗр вӑтӑр-хӗрӗх километрта шыв урлӑ каҫнӑ та, нимӗҫсене тимӗр ункӑпа ҫаварса илме тапратнӑ имӗш, ҫавӑнпа та халь вӗсен тармалла пулнӑ.

Халӑх савӑнать.. Ку темрен те ырӑ хыпара пӗр-пӗрне пӗлтерсе, ҫынсем Гитлер хурахӗсен пусмӑрӗнчен хӑтӑлса ҫитмелли телейлӗ саманта кӗтеҫҫӗ.

— Ах, часрах тасалччӗрччӗ! Каллех эҫемсем пек пурӑнма тытӑнаттӑмӑр, ирӗклӗн сывлама пуҫлаттӑмӑр!..

Ачасем те часах илтрӗҫ куна. Илтрӗҫ кӑна мар, хӑйсен куҫӗпех курса тӑчӗҫ нимӗҫсем вӑрттӑн шӑвӑнма

Гос. Публичная библиотека

тытăннине. Кун çинчен ачасем, мăннисем пек те мар, уççанах калаçма пуçларĕç. Харамасть вĕт ача-пăча!

Сенька Горохов, вăрçă пуçланиччен ялти шкулăн пиллĕкмĕш класра „отлично" паллăпа вĕренсе тухнаскер, пĕр каçхине урамри пур ачасем умĕнчех çапла каларĕ:

— Фрицсене капут çитрĕ! Сисетĕр-и, епле тикать* тăваççĕ? Ыр пурнăçран мар ĕнтĕ çав,—пирĕннисем килеççĕ!

Амăшне те çав сăмахсенех каларĕ вăл, анчах лешĕ çавăнтах пÿлчĕ ăна:

— Асту, такам умĕнче персе ан яр! Лешсем илтсен, юлашки сехетрех майна пăрса хăвареç!

— Халь ĕнтĕ нимĕн те мар!—терĕ ăна хирĕç Сенька.— Чи хăрушши иртрĕ, часах каллех ирĕклĕ пулатпăр, курăн ака!

— Ăна эп хам та пĕлетĕп, анчах та вĕсем ялсенчен чакса кайнă чух пушшех ураççĕ, тет,—лăпланмарĕ

* „Тикать"—украинла „тарни" тени пулать.

амăшĕ.—Илтрĕн пуль, Уварово районĕнче пĕр ял та хăварман, пĕтĕмпех çунтара-çунтара янă, тет, çийĕнчен тата пĕр хĕрĕх çынна ял хыçне илсе тухса персе пăрахнă...

— Илтнĕ,—аллипе сулчĕ Сенька.—Çапах та, тин эпĕ лекес çук ĕнтĕ.

— Епле пит шанатăн вара? Ак, хăль килсе кĕрес пулсан, мĕн тăвассу пур?

— Ак вĕсене!—Сенька шалавар кăсъинчен йăпăртах нимĕçсен парабеллумне* кăларса кăтартрĕ.—Пĕр иккĕшне вĕлеретĕп те таратăп!

Амăшĕ пушшех хăраса кайрĕ. Нимĕçсем кам патĕнче те пулин хĕçпăшал тупсан, ăна çавăнтах вĕлерсе пăрахнине вăл питĕ лайăх пĕлнĕ.

— Турăçăм!—пĕççисене шартах çапрĕ вăл.—Мĕн хăтланатăн эсĕ? Юлашки саманг ра пуçна çиес килет-и? Халех ăçта та пулин кайса пытар, куçăман кургăр ăна!

— Юрĕ-çке, юрĕ...—терĕ ăна хирĕç ывăлĕ лăпканах.—

* Нимĕçсен револьвер³.

Ан хăра. Эп ку япалана сакăр уйăх çурă пытарса пурăнтăм, халь тин, кирлĕ пулать пуль тесе, кăларса тасатрăм.

— Немуй* курсан?

— Пĕрре курсан, çавăнтах курми пулать!

Сенька револьверне каллех кăсъине чикрĕ те, урамалла тухрĕ. Каç пулма пуçланăччĕ ĕнтĕ, хĕвел анасси те инçе юлман. Ку вăхăтра вăрçăччен яланах хиртен колхоз кĕтĕвĕ кĕрлесе, тусан мăкăрлантарса килекенччĕ. Халь шăпах, çерçисем çеç сиккелесе çӳреççĕ урам варринчи çул çинче. Пĕр-ик эрне каялла нимĕçсем юлашки выльăхсене хăваласа кайрĕç: камăнне — качака путеккинчи, камăнне — сысна çури, тепринне — ăнсăртран хăтăлса юлнă пĕртен-пĕр сурăха. Выльăх-чĕрлĕх çуккипех урамсемпе килхушшисенче пилĕк таран курăк ӳссе ларчĕ, хуть те пытанмалла выля!

Енерхи-виçĕмкунхи пекех, Сенька çак чĕрене ыраттаракан шăплăхпа тулнă урам тăрăх ял вĕçĕнчи çӳллĕ

---

* Нумай вырăнсенче хресчен хĕрарăмĕсем нимĕçсене „немуй" тесçĕ.

сӑрт ҫине тухса тӑчӗ. Кунтан питӗ инҫе курӑнна. Сӑрт ҫуммипе—Вазуза шывӗ юхса выртать, унтан ҫатма пек тикӗс ҫарансем пуҫланаҫҫӗ те таҫта ҫитиех тӑсӑлаҫҫӗ. Пӗлӗтпе ҫӗр пӗрлешнӗ пек курӑнна ҫӗрте, инҫетри горизонтра—вӑрман мӗлки кӑвакарать, вӑл вӑрманта—чугунҫул, пӗчӗк станци пур. Астӑвать Сенька: нимӗҫсем хӗвелтухӑҫнелле кайнӑ чух ҫав станци патӗнче тӑватӑ кун ҫапӑҫу кӗрлерӗ.

Сенька шучӗпе, Хӗрлӗ Ҫар халь ҫав енчен килмелле пулнӑ... Ҫак сарлака улӑхпа, унӑн ик енчи сӗвек сӑртсем тӑрӑх хамӑрӑн танксем кӗмсӗртетсе килессине, вӗсем хыҫҫӑн вӗҫӗ-хӗррисӗр боецсем „урра" кӑшкӑрса чупассине вӑл халь питӗ кӗтет. Мӗншӗн тесен вӗсемпе пӗрле яла ҫӑлӑнӑҫ, ирӗклӗх, телей килессине вӑл питӗ лайӑх пӗлнӗ-ҫке, ӑна пӗтӗм чӗрипе туйнӑ.

Халь сӑрт ҫине тухсан, Сенька каҫхи уҫӑ сывлӑша кӑкри туличчен шалалла туртса илчӗ те каллех йӗритавралла пӑхма тытӑнчӗ. Малтан чечексем айне пулнӑ симӗс улӑхалла пӑхрӗ вӑл, унтан унӑн куҫӗсем кӑвак кантӑк пек ҫутӑлса выртакан Вазуза ҫине куҫрӗҫ. Ҫав

тери илемлӗ ӗнтӗ, ытармалла мар илемлӗ! Анчах ку илем халлӗхе никама та савӑнтармасть ҫав, мӗншӗн тесен—ун ҫинче пусмӑр яванса тӑрать... Ав, пур ҫӗрте те тӗмескесем курӑнаҫҫӗ. Сенька пӗлет: вӑл тӗмескене дзотсем, теҫҫӗ, вӗсен ӑшӗнче—пулемӗтсем лараҫҫӗ... Ял халӑхне виҫӗ уйӑх ӗҫлеттерчӗҫ ҫавсене тунӑ ҫӗрте!

— Пурӗпӗрех аркатаҫҫӗ ак вӗсене!—шухӑшларӗ Сенька.—Ҫӗр айӗнче пытаннипе те нумаях хӑтӑлаймӗҫ!..

Сасартӑк вӑл инҫетре, вӑрманта чугунҫул станцийӗ патӗнче снаряд ҫурӑлнине илтрӗ. Самантран тепри ҫурӑлчӗ. Унтан ҫине-ҫинех шартлатма тытӑнчӗҫ. Вӑрман ҫийӗнче пӗлӗт пек хура тӗтӗм йӑсӑрланса хӑпарчӗ...

— Пуҫланчӗ! Тупата—пуҫланчӗ!—савӑннипе чутах кӑшкӑрса яратчӗ Сенька. Тата кӑшт тӑркаларӗ те часрах килнелле чупрӗ.

— Илтетӗн-и, пирӗннисем килеҫҫӗ?—хавасланса пӗлтерчӗ вӑл амӑшне, аллипе хӗвелтухӑҫнелле кӑтартса.— Халӑхри сӑмах ахаль пулман иккен!.. Ав епле кӗмсӗртеттере пуҫларӗҫ! Тен пирӗн пичче те ҫитсе тухӗ, э? Пулма пултарать вӗт ҫавӑн пек телей?

— Кам пĕлет... Те чĕрĕ-ха пиччу, те тахçанах пуçне хунă,—терĕ ăна хирĕç амăшĕ пусăрăнчăклăн.—Шанмастăп ĕнтĕ...

Çапах та, инçетри тупă сассисене урама тухсах итлерĕ.

— Чăнах переççĕ... Пирĕннисемех пулмалла. Чĕрисем çирĕпрех пулччăр, тăшмана хăвалама вăйĕсем çитчĕр.

— Ан хăра, çите-ет!—хăй çапăçма каяс пекех аллисене сăгăркаласа илчĕ Сенька.—Куран акă, епле çĕмĕрсе килĕç!

Инçетре снарядсем ӳке-ӳке çурăлнине вĕсем татах итлесе тăчĕç. Хăйсен чĕрисем савăнăçлăн тапаççĕ...

— Мĕншĕн çывăрмастăр? Мĕн тума тухса тăтăр?—кĕтмен çĕртен кăшкăрса пăрахрĕ такам çав вăхăтра.

Вĕсем патне икĕ нимĕç салтакĕпе ялти полицейски—ĕлĕк лаша вăрри пулнă Васька-Вор пырса тăчĕç.

— Эсир çак таранччен те пуранăç йĕркисене пĕлместĕр-и? Е розга тутанса пăхас килет-и?—витĕр шăтарас пек пăхрĕ Сенькăпа унăн амăшĕ çине Васька-

Вор.—Хӗвел анна хыҫҫӑн урама никамӑн та тухма юрамасть вӗт!

— Каҫарӑр...—Сенькӑн амӑшӗ шуралса кайрӗ.—Пӗр чӑх пур та пирӗн... Ҫав таҫта кайнӑ.

— Кӑтартӑп сире чӑх! Хӗрлисене кӗтетӗр пуль-ха? Вӑл аллинчи туйине выляткаласа илчӗ.

— Ӑҫтан килччӗр ӗнтӗ вӗсем? Асра та ҫук...

— Пӗлетпӗр сирӗн асра мӗн пуррине! Анчах та эсир кӗтни ахалех пулать, хӗрлисене нимӗҫсем каллех Мускав патнелле хӑваласа кайнӑ, часах акӑ Мускава та илеҫҫӗ вӗсем! Марш киле!

Васька-Вор чышкине кӑтартрӗ. Сенькӑпа амӑшӗ урӑх ним те каламарӗҫ, лешсем ҫапӑҫсах каясран часрах пӳртелле кӗчӗҫ.

— Хӑҫан хӑтӑлӑпӑр-ши ку шуйттансенчен! — тарӑнӑн сывласа илчӗ амӑшӗ.

— Часах ӗнтӗ, часах...—каллех хавхалантарчӗ ӑна Сенька.—Ӗнен ман сӑмаха!

Вӗсем тӗрлӗ курӑксенчен пӗҫернӗ тӑварсӑр симӗс шӳрпене сыпкаларӗҫ те, ҫывӑрма выртрӗҫ. Тӑлӑкре

Сенька питĕ телейлĕ пулчĕ: ĕнтĕ яла Хĕрлĕ Çар çитсе кĕнĕ пек, пурте темле савăнăçлă, нимĕçсем вăхăтĕнче еплe тӳссе пурăнни çинчен ыйтаççĕ, Сенькăна тутлă çимçе çăкăрпа хăналаççĕ... Сенька çиет, çиет, анчах ниепле те тăранаймасть... Красноармеецсем ăна çаплах:

— Çи, çи, пирĕн нумай халь, пурне те çитет,—теççĕ...

...Ир енне вăл таçта сывăхрах снарядсем çурăлнине илтнипе вăранса кайрĕ. Пăхать—амăшĕ çук. Часрах урамалла сиксе тухрĕ. Хĕвел халь çеç хĕрелсе хăпарма тыттăннă мĕн-ха, курăк çинче çăра сивĕ сывлăм выртнă—кашни пусмассерен йĕр пулса юлать.

— Анне!—кăшкăрса чĕнчĕ Сенька.

— Мĕн? Кунта эпĕ!—урамри нӳхрепрен сас пачĕ амăшĕ.

— Мĕн тăватăн вара эс унта?

— Ăпăр-тапăрсене пуçтарса нӳхрепе антаратăп-çке, пушар пулсан ахалех çунса каяççĕ...

— Э-э, тупнă ĕç!—мăн çын пекех аллипе сулчĕ Сенька.—Пуçсем сывă пулччăр!

Снаряд ял вĕçĕнче, Вазуза хĕрринче ӳксе çурăлчĕ. Тепри пулсан, çак самантра часрах пытанса лармалли

вырăн шырамалла, анчах Сенькăн чĕри нихçанхинчен те хавасларах тапма пуçларĕ те—вăл снарядсем ӳкнĕ еннелле чупрĕ. Унăн халь ял патнелле çывхарма пултаракан красноармеецсене курас килчĕ. Паллах ĕнтĕ, çурăлакан снарядсем—совет снарячĕсем пулнă, вĕсем хыççăн хамăрăн боецсем килме тивĕç. Часрах курасчĕ вĕсене, часрах кĕтсе илесчĕ!..

Вăл каллех ĕнер каç тавралăха сăнаса тăнă вырăна чупса çитрĕ. Улахра никам та курăнмарĕ, анчах та унта та кунта мăкăрăлса тăракан нимĕçсен дзочĕсем таврашĕнче снарядсем ӳке-ӳке çурăлни аванах курăнчĕ. Ака—вĕсенчен пĕрине снаряд тĕп-тĕрĕсех пырса тиврĕ, вара çĕрпе, хăрăмпа пĕрле сывлăшалла пĕренесем, каштасем вăркăнса хăпарчĕç. Самантранах тепри арканса кайрĕ.

— Çав кирлĕ! Çак кирлĕ!—тесе савăнса тăчĕ Сенька.

Сасартăк, вăл Вазузăн леш енчи çыранне пăхрĕ те, унта нимĕç салтакĕсем упалене-упалене темскер ĕçленине курчĕ. Сахалтан та пĕр 20—30 салтак пулĕ. Хăварт кăна ăшăх шăтăк алтаççĕ те—унта темле япала

илсе хураççĕ, кайран çиелтен çĕрпе витеççĕ. Питĕ васкаса ĕçлеççĕ хăйсем! Чугунçул енчен снаряд шăхăрса килни илтĕнсен, çĕр çумне лăпчăнса выртаççĕ, унтан каллех чакаланма тытăнаççĕ.

— Мĕн мурĕ тăваççĕ кусем капла?—ăнланаймасăр тăчĕ Сенька.

Вăл çул тăрăх икĕ лаша кÿлнĕ нимĕç лавĕ çырманалла аннине асăрхарĕ. Лавĕ çине туллиех çатма пек çаврака симĕс коробкасем тиенĕ.

— Аха-а! А-ава мĕн!..—тавçăрса илчĕ те Сенька, пуçне кăчăртаттарса хыçрĕ.—Минăсем лартаççĕ, сволочь фрицĕсем! Хĕрлĕ Çара минăсем тăрне тăвасшăн, шуйттансем!..

Мина мĕн иккенне Сенька пит лайăх пĕлнĕ... Шутсăр сиенлĕ япала вăл! Çиелтен пăхма акаль лаптак коробка кăна, анчах ун ăшне сиктерсе яракан япаласем туллиех тултарнă. Ăна, çĕре кăшт кăна алтса, курăнми туса хураççĕ те,—ун çине кам та пулин пырса кĕрсен—чĕррĕн юлаймасть вара. Çынсене çеç мар—танксене те çĕмĕрсе сывлăшалла сирпĕтет! Хĕрлĕ Çар

çывхарнă май, нимĕçсем халь Сенькăсен ялĕ патнелле пымалли çулсене те, шыв хĕррине те минăсем лартнă.

— Капла мĕн пулса тухать-ха?—хыпăнма пуçларĕ Сенька.—Пирĕннисем килеççĕ те—ял патне çитиччен пурте минăсем çине тăрăнса вилсе пĕтеççĕ вĕт!..

Темиçе самант хушши вăл ним тума аптăраса тăчĕ, унăн чĕри, пăлханса кайнипе, хытăран хытă тапма пуçларĕ.

— Тупата, тем чухлĕ красноармееца вĕлереççĕ ку шуйттан япалисемпе...

Вазуза леш енне снарядсем тата çăрарах ÿкме пуçларĕç. Мина лартакан нимĕçсем, кĕпер урлă каçнă лав патне чупса пырса, хайхи симĕс коробкăсене тата хытăрах васкаса çĕклеме тытăнчĕç. Пĕрисем çĕклесе каяççĕ, теприсем çĕре чава-чава хураççĕ. Ак ĕнтĕ, минăсене кĕпер патне лартма тытăнчĕç—кашни утăмрах лартаççĕ. Леш енче лартса тултарсан, ку енче лартма пикенчĕç. Пĕр вунпилĕк-çирĕм минут хушшинче лав çинче пĕр мина та юлмарĕ. Унтан вара салтаксем пурте тăвалла чупса хăпарчĕç те, çуртсем хушшинелле кĕрсе кайса, курăнми пулчĕç

— Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ, мĕн тăвас?!—çаплах татăклă шут тума пултараймасăр тăчĕ Сенька.—Çула пĕтĕмпех картларĕç, кунтан халь пĕр боец та иртеймест...

Çапла шухăшларĕ кăна—Вазуза леш енчи сăрт хысакĕ енчен вунă-вуникĕ танк—совет танкĕсем!—шуса тухрĕç. Вĕсем, пĕр харăсах секундлăха чарăнса тăрса, тупписенчен Сенькăсен ялĕ çинелле печĕç,—снарядсем Сенькăн пуçĕ урлах ÿлесе иртсе кайрĕç,—унтан малалла ыткăнчĕç. Вĕсем кĕмсĕргетни таçта çитиех илтĕнчĕ.

Сенькăн сывлăшĕ тухми пула пуçларĕ.

Танксем çывăхарса килнĕ май, Сенька вĕсем çинче темĕн чухлĕ красноармеецсем ларнине асăрхарĕ. Вĕсем ĕнтĕ Сенькăна, ун амăшне, вĕсен ялĕнчи пур совет çыннисене те нимĕç кашкăрĕсен пусмăрĕнчен хăтарма, вилĕмрен çăлма кĕрлеттерсе пынă, анчах самай ял патне çитсен—вĕсен çулĕ татăлма пултарнă.

— Пĕтеççĕ вĕт... Пурте пĕтеççĕ!..—пăшăлтатса илчĕ вăл.

Текех шухăшласа тăма юраман. Халь кашни самант хаклă пулнă: часах танксем те, вĕсем çинчи десант та минăсем çине пырса кĕресси курăнсах тăнă.

— Пĕлтерес! Хуть те тем пулсан та—çитсе пĕлтерес вĕсене!—терĕ те вара Сенька, сăртран чупса анса, йывăç тĕммисем, мăй таран ӳснĕ курăксем хушшипе, шыв хĕррипе аналалла вăркăнса пычĕ,—шурă вăрăм çӳçĕ çеç вĕлкĕшрĕ унăн.

— Ишсе каçатăп та, ав çав пĕчĕк варпа чупатăп. Унта мина пулма кирлĕ мар...—шут турĕ вăл.

Унăн аллисене, питне-куçне вĕлтĕрен пĕçертет, çара урисене пĕлтĕрхи курăксем тирессĕ, анчах ăна халь ним те чарса тăма пултараймасть.

— Часрах çитесчĕ кăна, часрах пĕлтересчĕ...—Минăсем çине пырса кĕме парас марччĕ!..

Питĕ хытă чупса, шăпах шоссе кĕперĕпе çуллахи кĕпер хушшине çитсен, Сенька пĕр йывăç тĕмми хыçĕнчен сиксе тухрĕ те, сасартăк курăк ăшĕнче пĕшкĕнсе ларнă çын çурăмне курах кайрĕ. Ку ытла та ăнсăртран пулнипе—тăпах чарăнса тăчĕ вăл, çав вăхăтра унăн



сылтӑм алли хӑй кӑсъинчи пистолет аврине ҫавӑрса тытрӗ... Тепӗр самантӗнче ҫав пӗшкӗнсе ларнӑ сын пуҫне ҫавӑрчӗ те, вӑштах сиксе тӑчӗ.

Ку ҫын — Васька-Вор пулнӑ мӗн, хайхи полицейски, каҫхине Сенькӑпа амӑшне урамран хӑвалаканни...

Урнӑ кашкӑр пек пӑхрӗ вӑл Сенька ҫине.

— Эс... эс мӗн шыраса ҫӳретӗн кунта, йытӑ ҫури?— терӗ те сӑмахсене шӑл витӗр сӑрхӑнтарса, Сенька патнелле пӗр утӑм ярса пусрӗ.

— Эс мӗн шыратӑн, эп те ҫавнах шыратӑп,—терӗ Сенька, пистолет аврине тата хытӑрах пӑчӑртаса.

— Хӗрлисене кӗтетӗн, коммунист чӗппи! Ак эп сана!..—Васька-Вор сылтӑм аллипе часрах револьвер кабурне вӗҫертме пикенчӗ, анчах та вӑл револьверне туртса кӑлариччен Сенька ӑна шӑпах кӑкринчен тӗллесе, икӗ хутчен персе ячӗ. Васька-Вор „ы-ых!“ теме ҫеҫ ӗлкӗрчӗ, унтан ҫавӑнтах тӗшӗрӗлсе анчӗ...

Сенька текех пӗр самант та тытӑнса тӑмарӗ. Калама та ҫук хытӑ пӑлханса кайнӑскер, вӑл шыва сикрӗ те, тепӗр еннелле ишме тытӑнчӗ. Хӑмӑшсем ӑшӗнчен

тухса, шăп Вазуза варрине çитсен, кая юлнă çыран енчен автомат сасси илтĕнсе кайрĕ...

— Чăк-чăк! Чăк-чăк!—шыва пырса тирĕнчĕç пульăсем.

— Мана переççĕ! Хăшĕ те пулин курнă ĕнтĕ... Е эп пенине илтсе чупса тухнă-и...—хăвăрт кăна шухăшласа илчĕ Сенька.—Ултапас пулать...

Хăйне çине-çинех персе тивертесрен, Сенька чееленме шут тытрĕ. Чипер ишсе пыраканскерех, вăл шыв тĕпнелле чăмса анса карĕ те, малтанхи вырăнтан чылай анатра пуçне кăларчĕ. Анчах çўлтен перекенни ăна каллех шыраса тупрĕ пулас—пульăсем каллех чаклатрĕç шыв çине.

— Тытасшăн, анчăк... Анчах тытаймастăн!..

Сенька каллех путрĕ те, пĕтме пуçланă мĕнпур вăйне пухса—леш енчи хăмăшсем патне çитиех чăмса пычĕ. Кунта ĕнтĕ ăна никам та курма пултарайман... Çыран патне шăмпăртатса çитсен, чĕри ытла та хытă, сиксе тухас пекех, тапнипе, пĕр вăй та юлманнипе, унăн сывлăш çавăрмаллăх месерле тăсăлса выртмалла пулчĕ. Анчах пĕр-ик минут та иртмерĕ пулĕ, вăл кал-



28202
Республиканская библиотека им. М. Горького Чувашской АССР

лех сиксе тăчĕ те, паçăрах сăнаса хунă пĕчĕк лупашка тăрăх улăха тухса, ял патнеллех çывăхаракан танксем еннелле кăшкăра-кăшкăра чупрĕ:

— Чарăнăр!.. Э-э-эй, ан кайăр, тăхтă-ăр!..

Танксем унтан чылай аякра пулнă-ха, анчах ăна асăрхарĕç,—çÿлте ларса пыракан боецсем йĕри-тавра хытă сăнаса пынă курăнать çав. Малти танкĕ тăпах чарăнса тăчĕ. Сенька ун патне çитесси пĕр çĕраллă метр юлсан, танк çинчен темиçе красноармеец сиксе анчĕç те, ăна хирĕç чупрĕç.

— Мĕн пулнă? Ăçта чупатăн?—тесе ыйтрĕ Сенька патне пуринчен малтан ыткăнса çитнĕ çÿллĕ сержант.

— Сирĕн пата... Сире пĕлтерме,—аран сывласа илчĕ Сенька.—Минăсем нумай лартрĕç, пĕтетĕр...

— Хăш тĕлте?

— Çул çинче, кĕпер патĕнче, шыв хĕрринче...

— Атя-ха эппин пирĕн командир патне!

Çÿллĕ сержант, тата халь чупса пынă ытти боецсем те ура çинче аран тăракан Сенькăна хул айĕнчен



28202

тытса, танксем пăтне илсе кареç. Сержант çавăнтах танк çинчен сиксе аннă майора пĕлтерчĕ:

— Çак ача каланă тăрăх, нимĕçсем кунта мина нумай лартнă, иртме çук! Аçта лартнине тĕплĕрех ыйтса пĕлес пулать...

Майор çавăнтах Сенька умне пырса тăчĕ:

— Минăллă вырăнĕсене кăтартма пултаратăн-и?

— Пултаратăп,—терĕ Сенька,—эп пĕтĕмпех курса тăтăм... Çавăнпа чупса килтĕм, пĕлтерес, терĕм.

— Тавтапуç, шăллăм!—ăна ыталаса чăмăртарĕ майор.—Эсĕ куна чăн-чăн патриот пек тунă! Питĕ матур! Сана куншăн тав тумалла çеç мар—награда парас пулать!

— Мана ним те кирлĕ мар,—пуçне пăркаларĕ Сенька,—эсир килни нимрен те хаклă...

— Ну, а нимĕçĕсем нумай-и сирĕн ялта?

— Нумай мар... Пур-çуккисем те тарчĕç пулмалла.

— Тарас умĕн минăсем лартнă та ĕнтĕ вĕсем!—сăмах хушрĕ çӳллĕ сержант.—Вĕсем халь тараççĕ çав, пур çĕрте те тараççĕ анчах юлашки самантра та сиен



туса хăварасшăн, урнă кашкăрсем! Анчах ĕмĕрĕ иртет ĕнтĕ вĕсен!

---

Сенька кăтартса панипе красноармеец-сапĕрсем виççĕр мина ытла чавса кăларчĕç. Ик сехетрен яла пырса кĕмелли çул пĕтĕмпех тасалса çитрĕ, анчах боецсем хăйсен мина шыраса тупмалли хатĕрĕсемпе халь çеç тасатнă вырăнсене тата тепĕр хут тĕрĕслеме тытăнчĕç.

— Ансăртран пĕри юлнă пулсан та, сиен тума пултарать вĕт...

Çав хушăра Сенька хайхи Васька-Вор çинчен аса илчĕ. Питĕ пĕлес килчĕ халь унăн: вилмеллипех вилнĕ-ши вăл бандит, е аманнă кăна-ши? Лекесси—лекнех ĕнтĕ, ахальрен ӳкес çук вăл...

— Атя-ха çавăнта, пĕр çĕре кайса пĕлер йăпăрт,— терĕ вăл боецсене ертсе пыракан сержанта.—Пĕр интерес пулма кирлĕ...

— Мĕнле интерес?

— Пĕр çын... Çук, çын мар, полицейски

— Ăçтан пĕлетĕн?

— Хам персе ӳкернĕ япалана епле пĕлмелтĕп вара?
— Епле персе ӳкертĕн, хăçан?
Сенька ăна кĕскен кăна паçăр мĕн пулса иртнине тата Васька-Вор кам пулнине каласа пачĕ. Çамрăк ачан паттăрлăхĕнчен тĕлĕнсех кайнă сержант вара хапăл тусах унпа пĕрле пычĕ...
Васька-Вор малтан мĕнле ӳкнĕ—çаплипех выртать иккен. Урăх хускалайман та вăл, пуля ăна чĕринчен тивнĕ курăнать.
Сержант унăн револьверне илсе чикрĕ, кăсъинчи хучĕсене кăларса илчĕ. Хăй çине лач! сурчĕ.
— Ирсĕр! Çав кăна кирлĕ ун пеккисене!..
Унтан вăл сасартăк курăк ăшĕнче выртакан тăрăхларах сар ешчĕк выртнине асăрхарĕ.
— Чим-ха, ку мĕскер?—тесе кукленчĕ вăл ун патне.—Ара, ку взрывчатка вĕт, сиктерсе яракан япала! Тем тесен те, ав çав кĕпере сиктерсе ишĕлтересшĕн пулнă вăл, урăх ним те мар. Ах, урнă йытă!..
Сенька та ун шухăшĕпе килĕшрĕ. Кĕперсĕр пуçне, ку таврара сиктерсе ямалли нимĕн те пулман

... Танксем, чип-чиперех шыв урлă каçса, ялă хăпар чĕç. Нӳхрепсенче, подвалсенче, çырмасенчи шăтăк çурăксенче пытанса ларнă çынсем вĕсене хирĕç çав тери савăнăçлăн чупа-чупа тухрĕç. Ку таранччен асаплланса, нимĕç çынçиенĕсенчен темĕн тĕрлĕ мăшкăл, хĕнхур тӳссе пурăннă, ырханланса çитнĕ çынсен куçĕсем хаваслăн çуталчĕç, хăйсене ирĕке кăларакансене тем пек тав туса, ытала-ытала чуптурĕç. Темле хăй тĕллĕнех митинг пуçланса кайрĕ.

Паçăр Сенькăран нимĕçсем çинчен ыйтса пĕлнĕ майор, халăх хăйсене çакăн пек ăшшăн йышăннишĕн тав туса, хĕрӳллĕ сăмах пуçларĕ, вăл ним çинчен пĕлмесĕр пусмăрта пурăннă çынсене Хĕрлĕ Çар халĕ хăватлă наступлени пуçласа яни çинчен, нимĕçсен танати пур çĕрте те пĕтесси çинчен, совет çыннисене пур çĕрте те ирĕке кăларса çитересси çинчен каларĕ, унтан совет çыннисен пурин те Хĕрлĕ Çара куллен пулăшса пымалли асăрхаттарчĕ.

— Ку тĕлĕшрен, сирĕн ял ачи Сеня Горохов пеккисенчен пример илме пулать, терĕ майор,—Сеня Го-

роховăн пиччĕшĕ те питĕ паттăр боец, нимĕҫсене ҫав тери ăнăҫлăн пĕтерсе пынăшăн икĕ орден илчĕ ĕнтĕ, эпир ăна пит лайăх пĕлетпĕр, вăл пирĕн чаҫрех,—анчах Сеня та пиччĕшĕнчен юлмасть иккен...

Халăх шăп пулчĕ. Хĕрлĕ Ҫар офицерĕ хăйсен ялĕнчи ҫынсем ҫинчен калаҫма тытăнни халăха тĕлĕнтерсех ячĕ, ҫавăнпа та сывлама чаранна пекех шăп тăрса итлерĕҫ ăна пухăннисем.

— Паян ҫав ҫамрăк патриот Сеня Горохов хăй пурăнăҫне шеллемесĕр, пире усăсăр юн тăкассинчен хăтарчĕ... Хăйне пăшалтан персе тăнине пăхмасăрах, шыв урлă ишсе каҫса, пирĕн пата чупса ҫитрĕ, нимĕҫсем миналана вырăнсем ҫинчен пĕлтерчĕ. Ăна пула, эпир ним сиен те курмарăмăр. Ҫав вăхăтрах тата Сеня Горохов, сирĕнген мăшкăлласа пурăннă Васька-Вора перменсе вĕлерсе, мăн ҫул кĕперне ишĕлтересрен хăтарнă. Ҫак паттăр ĕҫсене шута илсе, совет правительстви ячĕпе сирĕн Сеньăна „За боевые заслуги" медальпе наградăлатăп...

Такамăн вăйлă аллисем Сенькăна ҫĕклесе, танк ҫине

хăпартса тăратрĕç, майор ун кăкри çине юн пек хĕрлĕ хăюлла çап-çутă медаль çакса ячĕ.

Пĕтĕм халăх хавасланса ал çупрĕ. Сенька, кăштах вăтаннă пек пулса, танк çинче кулкаласа тăчĕ, хăй куçĕсемпе амăшне шырарĕ.

— Курать-ши вăл мана?..

Анчах амăшĕ ăна вăл танк çине хăпарсанах курнă, ывăлĕ çине пăхнă май унăн куçĕсенчен савăнăç куççулĕ юхнă, ватă чĕри çĕнĕ вăйпа тулса тапма тытăннă.

---

Редактор Н. Васкина.

НТ 04218 Подписано к печати 30-XI-44 г. Объем 0,75 п. л. Заказ 1958
Тираж 5000 экз.

г. Чебоксары; типография №1 Управл. полиграфпромышленности при СНК ЧАССР

1946 г.
Акт № 794
Вкладн. л.

Инв. № 2755.

47-3202/26

Цена ~~1 р. 50~~ коп.
0-15

15612
Чув
1-28

*Леонид Агаков*

# *МЕДАЛЬ*

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ — 1945